Шыйи ҫул Ҫ тухать. Хакĕ 15 пус

1942 МАРТĂН 14 ШĂМАТКУН 61 (6086) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Государство хăрушсăрлăхĕн лейтенантне С. И. Солнцев юлташа Совет Союз Геройĕн званине парасси ҫинчен

Нимĕҫ захватчикĕсен тылĕнчи партизанла кĕрешӳре паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн государство хăрушсăрлăхĕн лейтенантне Сергей Иванович Солнцева ЛЕНИН орденĕ тата ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА медалĕ парса Совет Союз Геройĕн званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 ҫулти мартăн 11-мĕшĕ.

СССР Совнаркомĕнче

Гражданла сывлăш флочĕн начальник заместителĕн Михаил Федорович Картушев юлташăн, служба ĕҫĕсене тунă чухне вилнĕскерĕн, ҫемьине пособи парасси тата пенси памалла тăвасси ҫинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫапла йышăнчĕ:

1. М. Ф. Картушев юлташăн арăмне — Р. Е. Картушевăна тата унăн хĕрне Рузаннăна пĕр хутчен 20.000 тенкĕлĕх пособи парас.

М. Ф. Картушев ҫемьине чĕрĕллĕх ҫакăн пек пенсисем памалла тăвас: арăмне Р. Е. Картушевăна кашни уйăхра 500 тенкĕ, хĕрне Рузаннăна вăл 18 ҫул тултариччен кашни уйăхра 300 тенкĕ.

2. М. Ф. Картушева пытарнипе государство шучĕпе тунă тăкака илес.

Поездсен бригадисене вĕсем ҫул ҫӳренĕ чухне апат-ҫимĕҫ продукчĕсем памалла тăвасси ҫинчен

Линия тăрăх ҫул ҫӳренĕ чухне поездсен бригадисен (машинистсен, машинист помощникĕсен, кочегарсен, кондукторсен, вагон мастерĕсен тата колонна маршрут начальникĕсен) ҫĕнĕ йышăр условисене пулса пынине шута илсе, ССР Совнаркомĕ, мартăн 13-мĕшĕнче шĕнчен пулса, поездсен бригадин кашни членне бригада ҫул ҫинче пулнă чухне кашни талăкра, карточкăна памалли нормăсăр пусне, тулевлĕ йĕркепе хушса ҫакăн пек паек памалла тунă: ҫăкăр — 400 грамм, колбаса — 100 грамм, сахăр — 20 грамм, табак — 20 грамм.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

Хĕрлĕ Ҫарăн авто-бронетанковăй войскисен инженерно-технически составне ҫар званийĕсем парасси ҫинчен

Оборона Государственный Комитечĕн постановленийĕ тăрăх Оборона Халăх Комиссарĕ ҫакăн пек приказ кăларнă:

1. 1942 ҫулти апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа Хĕрлĕ Ҫарăн авто-бронетанковăй войскисен инженерно-технически составĕ валли ҫакăн пек ҫар званийĕсем тăвас:

Техник—лейтенант,
Старший техник-лейтенант,
Инженер-капитан,
Инженер-майор,
Инженер-подполковник,
Инженер-полковник,
Инженерно-танковăй службăн генерал-майорĕ,
Инженерно-танковăй службăн генерал-лейтенанчĕ.
Инженерно-танковăй службăн генерал-полковникĕ.

2. Фронтсен, округсен тата армисен ҫар совечĕсен икĕ уйăх хушшинчи срокра пĕтĕм инженерно-технически состава, 1-мĕш рангри воентехник званине илнисем таран пăхса тухса, вĕсене ҫак приказăн 1-мĕш пункчĕ тăрăх ҫĕнĕ ҫар званийĕсем памалла.

Инженерно-технически состав ҫинчен, 3-мĕш рангри военинженертан пуҫласа унтан аслисем ҫинчен, Хĕрлĕ Ҫарăн авто-бронетанковăй войскисен кадрсен Управленине 1942 ҫулти апрелĕн 15-мĕш тĕлне аттестаци материалĕсене тăратмалла.

3. Авто-бронетанковăй войскăсен фронтри ҫарĕсенче строевой чăсĕсенче инженерно-технически составĕ валли ҫар званийĕсене илмелли выслуга срокĕсене ҫакăн пек тăвас: техник-лейтенант валли—4 уйăх, старши техник-лейтенант валли—6 уйăх, инженер-капитан валли—8 уйăх, инженер-майор валли—10 уйăх. Старши техник-лейтенантран пĕҫĕнниисене ҫар званийĕсене фронтсемпе армисен ҫар совечĕсен памалла. Инженер-капитанран пуҫласа инженер-полковник таран ҫар званийĕсене Оборона Халăх Комиссариачĕн приказĕсем тăрăх памалла.

Фронтсемпе армисен ҫар совечĕсене ҫакăн пек право парас: уйрăм чухне ĕҫре пит те паллă ҫитĕнӳсем тата паллăрса тăракан ĕҫсем тусан, вĕсем ҫар званийĕсене старши техник-лейтенант таранах черетсĕр памалла пултараҫҫĕ тата инженер-капитанран пуҫласа унтан аслисене те черетсĕр ҫар званийĕсем парасси ҫинчен ыйтса ходатайство тăратма пултараҫҫĕ.

4. Хĕрлĕ Ҫарăн авто-бронетанковăй войскисен инженерно-технически составĕ валли тумтир формипе уйрăмлăх паллисене командный составăннипе пĕр пек тăвас. Петлицăсем ҫинче Хĕрлĕ Ҫарăн инженерно-технически составĕ валли йышăннă эмблема пулмалла.

Ялхуҫалăх специалисчĕсен ҫĕнĕ кадрĕсем

Колхозсене тата машинно-тракторнăй станцисене аслă шкултан вĕренсе тухнă специалистсен ҫĕнĕ йышĕ хутшăнмалла. Мартпа апрель уйăхĕсенче Ҫĕрĕҫ халăх комиссариачĕн аслă шкулĕсенчен икĕ пин ҫын вĕренсе тухмалла, вĕсем агрономсем, зоотехниксем, ветеринари врачĕсем, инженер-механиксем, землеустроительсем, гидротехник-мелиораторсем пулса ĕҫлемелле. Кăҫал ҫав шкулсенчен пурĕ 9000 специалист тухмалла. Шкултан вĕренсе тухнисене пуринчен ытла Ҫĕпĕр, Урал, Инҫетри Хĕвелтухăҫ, Вăтам Ази районĕсене тата нимĕҫ оккупантĕсенчен ирĕке кăларнă районсене ĕҫлеме яраҫҫĕ. Омскри, Ивановăри, Воронежри, Иркутскри тата казахсен ялхуҫалăх аслă шкулĕсенчен вĕренсе тухнă агрономсемпе зоотехниксен пысăк ушкăнĕсем хăйсем ĕҫлеме каймалли вырăнсене ĕнтĕ тухса кайнă та.

Ялхуҫалăх институчĕсен преподавателĕсем тата ҫĕрĕҫ органĕсенче ĕҫлекен специалистсем нумайĕшĕ ҫуркунне колхозсене каяҫҫĕ. Вĕсем колхозниксене вăйлă тырпулшăн кĕрешнĕ ҫĕрте пулăшаҫҫĕ.

Вăтам Азири ялхуҫалăх аслă шкулĕсенче вĕренекен студентсем ĕнтĕ халех уйхирсенче ĕҫлеҫҫĕ. Кĕҫĕн классенче вĕренекен студентсем тракторсем тата ытти сложнăй машинăсем ҫинче. Аслăрах классенчи студентсем агрономсем, ветеринари врачĕсем тата фельдшерсем пулса ĕҫлеҫҫĕ. Апрель уйăхĕнче Ҫĕрĕҫ халăх комиссариачĕн ытти институчĕсенче вĕренекен студентсем те колхозсене ĕҫлеме тухса каймалла. (ТАСС).

Ҫĕрпӳ педучилищинче ялхуҫалăх машинисене вĕренеҫҫĕ

ҪĔРПӲ. Вăтам шкулсен аслă класĕсемпе педучилищĕсенче кăҫалхи ҫулăн II-мĕш пайĕнче ялхуҫалăх ĕҫĕсене тата ялхуҫалăх машинисене вĕрентме пуҫларĕҫ. Ку питĕ кирлĕ ĕҫ пулса тăрать.

Ҫĕрпӳри педучилищĕре ҫак ҫĕнĕ предмета вăхăтра вĕренме пуҫларĕҫ. Преподаватель Михайлов, ялхуҫалăх институтĕнчен вĕренсе тухнăскер, ҫĕнĕ предметпа ачасене питех те интересленсе вĕрентет.

Вĕренӳ программи ҫакăн пек: 1-мĕш класра плугпа сӳрене тата ҫĕр ĕҫĕн пĕчĕкрех инвентарĕсене вĕренеҫҫĕ, II-мĕш класра ялхуҫалăхĕн сложнăй машинисене (сеялка, веялка тата ыттисене те) вĕренеҫҫĕ, III-мĕш класра тракторпа комбайна вĕренеҫҫĕ. Вĕренекенсен задачи ҫав машинăсемпе паллашасси ҫеҫ мар, вĕсемпе лайăх ĕҫлеме вĕренсе ҫитесси пулса тăрать.

Преподаватель ялхуҫалăх ĕҫĕсен теорине практикăпа ҫыхăнтарса пырать. Унăн урокĕ вăхăтĕнче класра сӳресем, плугсем тăраҫҫĕ. Вĕренекенсем вĕсен пайĕсемпе паллашаҫҫĕ, ҫав пайсем ăҫта тумалла кирлине, мĕнле ĕҫленине кураҫҫĕ. Ачасем вĕсене пайăн-пайăн салатса пуҫтарма та вĕренеҫҫĕ.

Трактор пайĕсене вĕренме колхоз картишне ҫӳреҫҫĕ. Тракторăн хăшпĕр пайĕсене салатса тата пуҫтарса пăхаҫҫĕ.

Ку таранччен классенче ҫак ҫĕнĕ предметпа 14—15-шер урок иртрĕ. Ачасен ҫĕнĕ предмета вĕренес кăмăлĕ пысăк.

П. ШООР.

СССР Ҫĕрĕҫ халăх комиссариатĕнче

1942 ҫулта ялхуҫалăхне аталантармалли государственнăй план ҫинчен

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановление пурнăҫа кĕртес майпа ССР Союзĕн Ҫĕрĕҫ халăх комиссарĕ И. А. Бенедиктов юлташ «1942 ҫулта ялхуҫалăхне аталантармалли государственнăй план ҫинчен» приказ кăларнă. Облаҫсенчи, крайсенчи ҫĕрĕҫ отделĕсене, республикăсен Ҫĕрĕҫ халăх комиссариачĕсене нарком вунă кунлă срокра ялхуҫалăх ĕҫĕсен, тракторпа тумалли ĕҫсен планĕсене районсем, МТС-сем, колхозсем, единоличниксен хуҫалăхĕсем патне ҫитерме хушнă.

Ялхуҫалăхĕн тĕп культурисен тухăҫлăхĕ енĕпе заданисем ҫирĕплетсе панă. Тĕштырăсем енĕпе приказра кăтартса панă вăтам тухăҫлăха шута илсе, вырăнсенчи ҫĕрĕҫ органĕсен тĕштырăн уйрăм культурисем тăрăх заданисем туса хатĕрлемелле, ҫавăн пекех вылăх апачĕ акакан культурăсем, пахча-ҫимĕҫсем, технически культурăсем тата сад-пахча культурисем тăрăх приказра заданисем паман пулсан, вĕсен тухăҫлăхĕн заданине те туса хатĕрлемелле. Ҫав заданисене область, край исполкомĕсенче, республикăсен Совнаркомĕсенче ҫирĕплетмелле.

Вырăнсенчи ҫĕрĕҫ органĕсен парниксем, теплицăсем хывас тата ҫĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе, йывăҫсем лартас, тут йывăҫҫине ĕрчетес, ҫырла йывăҫҫисем тата виноград лартас, субтропически культурăсен питомникĕсене тăвас, ҫарансемпе кĕтӳ ҫӳретмелли вырăнсене лайăхлатас тĕлĕшпе плансем туса, вĕсене вунă кунлă срокра районсемпе колхозсем патне ҫитермелле.

Ялхуҫалăх ĕҫĕсен правительство ҫирĕплетнĕ планне вăхăтра тата хăвăрт пурнăҫа кĕртес тесе, вырăнсенчи ҫĕрĕҫ органĕсен, МТС-сен тата колхозсен чылай организациллĕ мероприятисем туса ирттермелле.

Ҫĕрĕҫ органĕсен колхозсенчи пĕтĕм туртăм вăйĕпе уйхир ĕҫĕсенче пĕтĕмĕшпех усă курмалла тăвас пулать, колхозсен уйхир ĕҫĕпе ҫыхăнман хуҫалăх ĕҫĕсенче усă куракан лашасемпе вăкăрсен хисепне май пур таранах чакарас пулать.

Ҫурхи уйхир ĕҫĕсенче колхозсенче пĕр лашапа тата икĕ вăкăрпа тумалли ĕҫсен чи пĕчĕк нормисене туса панă. Алтай, Приморье крайĕсенче, Челябинск, Чкалов, Куйбышев, Саратов, Сталинград, Воронеж, Тамбов, Пенза, Горький, Рязань облаҫĕсенче, Башкир, Калмык, Мари, Тутар, Мордва АССР-сенче ҫурхи уйхир ĕҫĕсем вăхăтĕнче пĕр ĕҫ лашипе тата икĕ вăкăрпа, ҫăмăл сухапа шутласан, 9 гектартан кая мар ĕҫлемелле. Красноярск крайĕнче, Омск, Новосибирск, Иваново, Ярославль облаҫĕсенче, Удмурт АССР-че тата Казах ССР-че 8 гектартан кая мар ĕҫлемелле. Краснодар, Орджоникидзе крайĕсенче, Киров, Иркутск, Чита облаҫĕсенче, Бурят-Монгол тата Чăваш АССР-сенче 7 гектартан кая мар ĕҫлемелле. Молотов, Свердлов, Архангельск, Вологда облаҫĕсенче, Туркмен, Узбек, Киргиз тата Таджик ССР-сенче 6 гектартан кая мар ĕҫлемелле. Якут, Коми, Дагестан, Кабардин-Балкар, Ҫурҫĕр Осетин, Чечен-Ингуш АССР-сенче, Армян, Грузин тата Азербайджан ССР-сенче 5 гектартан кая мар ĕҫлемелле.

Республикăсенчи наркомзёмсен, облаҫсемпе крайсенчи ҫĕрĕҫ отделĕсен кашни район валли ҫурхи уйхир ĕҫĕсем вăхăтĕнче пĕр лашапа е икĕ вăкăрпа ĕҫлемелли нормăсене туса парас пулать, вĕсене тунă чухне уйхир ĕҫĕсен пĕтĕм хисепне тата туртăм вăйĕ мĕн чухлĕ пуррине, ҫурхи уйхир ĕҫĕсене мĕнле срокра вĕҫлемеллине шута илес пулать, ҫав нормăсене республикăсен Совнаркомĕсенче, облаҫсемпе крайсен исполкомĕсенче ҫирĕплетме тăратас пулать.

Районсенчи ҫĕрĕҫ отделĕсен ҫурхи уйхир ĕҫĕсен планĕсене, вăл ĕҫсене чĕрĕ туртăм вăйĕпе тăваҫҫĕ пулсан, сухалас, культиваци тăвас, акнă хыҫҫăн сӳрелес енĕпе уйрăммăн туса кашни колхоз патне ҫитермелле. Ҫавăн пекех колхозсене пĕр лашапа е икĕ вăкăрпа мĕн чухлĕ ĕҫлемеллине кăтартса заданисем ҫитерсе памалла.

Ҫĕрĕҫ органĕсен кашни колхозрах ҫурхи уйхир ĕҫĕсем вăхăтĕнче ĕҫ выльăхĕсене ҫитерме кирлĕ чухлĕ концентрациллĕ апатсем, лайăх утă обязательно упраса хăвармалла тăвас пулать, ĕҫ выльăхне уйхир ĕҫĕсем пуҫланас умĕн пĕр уйăх малтан вăйлăн тăрантарассине организацилемелле, ҫапла вара чĕрĕ туртăм вăйне уйхир ĕҫĕсем тĕлне лайăх мăнтăрлатса ҫитермелле. Ҫĕрĕҫ органĕсен ҫавăн пекех лашасем валли, вăкăрсемпе ĕнесем валли кӳлмелли хатĕрсем тăвас тата юсаса хатĕрлес ĕҫе, транспорт инвентарьне (урапасем, арбăсем, урапа куститăрмисем т. ыт. те) туса кăларас ĕҫе колхозсенче хăйсенче те, ҫавăн пекех вырăнти промышленноспа промкооперации предприятийĕсемпе калаҫса татăлса та организацилемелле.

Ĕнесемпе ĕҫлекен колхозниксем валли ĕҫ нормине ҫав ĕҫре лашапа ĕҫлесе тумалли нормăн виҫĕ пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ туса колхозсен правленийĕсене сĕнӳ панă. Хăйсен ĕнисемпе колхозра ĕҫлекен колхозниксене, вĕсем ĕҫ нормине тултарсан, икĕ хут ӳстерсе ĕҫкунĕ ҫырса параҫҫĕ. Колхозниксен ĕнисене вĕсем общественнăллă хуҫалăхра ĕҫленĕ вăхăтра ҫитерме колхозри общественнăллă выльăхсем валли йышăннă нормăсем тăрăх выльăх апачĕ памалла. Ĕнесемпе ĕҫленĕ чухне вĕсене ҫăмăл хатĕрсемпе кӳлмелле. Аратлă ĕнесемпе уйхир ĕҫĕсенче усă курма кирлĕ мар.

Облаҫсенчи, крайсенчи ҫĕрĕҫ отделĕсен начальникĕсен, республикăсенчи Ҫĕрĕҫ халăх комиссарĕсен вунă кунлă срокра районсем, колхозсем тата МТС-сем патне ҫĕнĕ районсенче техникăллă культурăсене акса ӳстермелли агротехникăллă обязательнăй мероприятисен планне ҫитермелле, ҫавăн пекех МТС-сенчи, колхозсенчи тĕштырăпа пахча-ҫимĕҫ сеялкисене, культиваторсене, тырпулсене апат паракан машинăсене юсамалли плансене, сахăр кăшманне акмалли, апат памалли тата ăна акнă ҫĕре ҫемҫетмелли мероприятисен планĕсене те вунă кунлă срокра ҫитерсе памалла. Сахăр кăшманне пăхса ӳстермелли тата пухса кĕмелли, алăпа ĕҫлемелли инвентарьсене (катмак, копач, ҫĕҫĕсем т. ыт. те) вырăнти промышленность предприятийĕсенче кирлĕ чухлĕ туса кăларассине организацилемелле.

Шăваракан ҫĕрсем ҫине акмалли заданисене, вăл ҫĕрсене акма хатĕрлес тата шăварас мероприятисене вунă кунлă срокра туса хатĕрлесе, районсем патне ҫитермелле. Кунпа пĕрлех шăваракан ҫĕрсем пур колхозсем валли шăваракансен, звеньевойсен тата бригадирсен кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе икĕ эрнелĕх—виҫĕ эрнелĕх курссем организацилемелле. Минераллă тата вырăнти удобренисене пуринчен малтан шăварăнакан участоксенче усă курмалла.

Облаҫсенчи, крайсенчи ҫĕрĕҫ отделĕсен начальникĕсен, республикăсенчи Ҫĕрĕҫ халăх комиссарĕсен, тракторпа тумалли ĕҫсен планне ҫитерсе панипе пĕрлех, МТС-сем валли ҫурхи ĕҫсем вăхăтĕнче кашни тракторпа тумалли заданисене (ҫăмăл сухапа шутласа) туса памалла, газогенераторнăй тракторсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе МТС-сене вутă хатĕрлекен предприятисем ҫумне ҫирĕплетессине организацилемелле, пĕрремĕш квартал хушшинче ҫулталăк валли палăртнă планăн 30 процентĕ чухлĕ вутă хатĕрлесе хумалла.

1942 ҫулти ҫуракин малтанхи уттă кунĕ хушшинче горючине, СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1939 ҫулти январĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, нормăран ирттерсе 10 процент чухлĕ расходлама ирĕк панă.

СССР Ҫĕрĕҫ халăх комиссарĕ 1941 ҫулта ялхуҫалăхне аталантармалли государственнăй план ҫинчен кăларнă приказра колхозсене, МТС-сене ҫуракине тĕлне организаци енĕпе хатĕрлесе ҫитерессине уйрăммăнах ҫавăрăнса пăхнă. Облаҫсенчи, крайсенчи ҫĕрĕҫ отделĕсен, республикăсенчи ҫĕрĕҫ халăх комиссарĕсен колхозсен производство планĕсене тата МТС-сен промфинпланĕсене ҫак сроксем тĕлне туса ҫитерсе ҫирĕплетес пулать: Азербайджан, Армян, Грузин, Узбек, Туркмен, Таджик, Киргиз ССР-сенче, Казах ССР-чи Кăнтăр Казахстан, Джамбул облаҫĕсенче—мартăн 10-мĕшĕнчен кая мар; Казах ССР-чи Алма-Ата, Кызыл-Орда облаҫĕсенче, Калмык, Дагестан, Кабардин-Балкар, Ҫурҫĕр Осетин, Чечен-Ингуш АССР-сенче, Сталинград, Ростов облаҫĕсенче, Краснодар тата Орджоникидзе крайĕсенче—мартăн 15-мĕшĕнчен кая мар; Саратов, Тамбов, Воронеж, Пенза, Чкалов, Куйбышев облаҫĕсенче, Мордва АСС-нче, Казах ССР-чи Актюбинск, Хĕвеланăҫ Казахстан облаҫĕсенче, Хабаровск тата Приморье крайĕсенче—мартăн 20-мĕшĕнчен кая мар; ытти облаҫсенче, крайсенче тата республикăсенче—мартăн 25-мĕшĕнчен кая мар.

МТС-семпе колхозсем хушшинче договорсем тăвассине ҫӳлте асăннă срок хыҫҫăн вунă кунлă срокран кая юлмасăр вĕҫлемелле.

Ҫĕрĕҫ органĕсен ҫулталăкри отчетсене тăвас, колхозсен тупăшне валеҫес ĕҫсене пурне те хăвăртрах вĕҫлес тĕлĕшпе те мерăсем йышăнмалла, юлса пыракан колхозсене счетнăй работниксем ярса пулăшмалла, колхозсенче тупăшсене тĕрĕс валеҫнине контроль тăвассине вăйлатмалла, тырпул тухăҫлăхне ӳстернĕшĕн тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноҫне хăпартнăшăн бригадăсене, звеносене тата уйрăм колхозниксене ĕҫшĕн хушса тӳлессине пурнăҫлас ĕҫре пулăшу памалла.

Уйхир бригадисене, звеносене тĕреклетес тата вĕсене ертсе пырас ĕҫе лайăхлатас тесе, колхозсемпе МТС-сен производство планĕсене ҫирĕплетме палăртнă срокра ҫĕрĕҫ органĕсен колхозсенчи уйхир бригадисене пухса йĕркелесе ҫитермелле, бригадăсенче тăман, администраципе управлени аппарачĕнче тата ытти ҫавăн пек ĕҫре ĕҫлекен колхозниксен хисепне май пур таранах чакармалла. Ĕҫрен тухса кайнă бригадирсен вырăнне опытлă тата активлă ĕҫлекен колхозниксен шутĕнчен ҫĕнĕ бригадирсем суйласа илсе ҫирĕплетмелле; бригадирсем пулма хĕрарăм колхозницăсене хăюллăнрах уйăрса лартмалла. Бригадăсем ҫумне ĕҫ выльăхĕсене, инвентарьсене, ялхуҫалăх машинисене ҫирĕплетсе памалла, машинăсемпе тата туртăм вăйĕпе усă курас ĕҫре обезличка пулмалла мар, кашни бригадăрах звеносемпе звеньевойсен составне суйласа илсе ҫирĕплетмелле. Ҫӳлте асăннă сроксенчех 1942 ҫулта кашни бригада, кашни звено уйрăм культурăсене мĕн чухлĕ акмаллине тата мĕн чухлĕ тухăҫ илмеллине кăтартса производствăллă заданисем туса хатĕрлемелле, вĕсене колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче ҫирĕплетмелле; звеносене техникăллă культурăсем, пахча-ҫимĕҫсемпе ытти культурăсем акмалли лаптăксене ҫирĕплетсе памалла.

Уйхир ĕҫĕсем пуҫланас умĕн икĕ эрне малтан кашни МТС-ра, колхозра, трактористсен бригадинче тата уйхир бригадинче ҫурхи уйхир ĕҫĕсен планне туса ĕлă рабочисен пухăвĕсенче сӳтсе-явмалла; ҫав планра уйрăм ĕҫсене тумалли сроксене, хăш колхозник мĕн ĕҫ тумаллине, хăш трактор тата хăш лаша мĕнле ĕҫре, мĕнле участокра ĕҫлемеллине кăтартса памалла. Уйхир ĕҫĕсем пуҫланас умĕн 10 кун малтан кашни колхозрах ача яслисем, детплощадкăсем, хирти станссем организацилемелле, хирте пĕрлешсе апатланассине организацилес тĕлĕшпе хатĕрленӳ ĕҫĕсене туса ирттермелле.

Пĕтĕм тракторсен паркне ҫурхи ĕҫсем валли хатĕрлес тесе, СССР Совнаркомĕ ирĕк памасăр тракторсемпе транспорт ĕҫĕнче тата ытти ҫавăн пек ĕҫсенче усă курма чарнă. Вĕсемпе МТС валли горючи турттарнă ҫĕрте ҫеҫ усă курма юрать. МТС-сен мастерскойĕсене тракторсемпе ялхуҫалăх машинисене юсас ĕҫсĕр пуҫне ытти ĕҫсем парса тултармалла мар.

Ҫурхи уйхир ĕҫĕсене хăвăртрах тума трактористсене материально интереслентерессине вăйлатас, тракторсемпе лайăхрах усă курмалла тăвас тесе, трактористсене премисем памалла тунă.

МТС-сенчи «СХТЗ» тракторпа ĕҫлекен трактористсем, вĕсем сухапа, сӳреленĕ ҫĕрте, культиваци тунă ҫĕрте тата акнă ҫĕрте малтанхи 15 кун хушшинче хăйсен сменинче ҫăмăл сухапа шутласан 45 гектартан кая мар ĕҫленĕ пулсан, 35 ĕҫкунĕ чухлĕ преми илеҫҫĕ; унсăр пуҫне ҫав срокра 45 гектартан ирттерсе ĕҫленĕ кашни гектаршăн пĕрер ĕҫкунĕ хушса илеҫҫĕ.

«Универсал» тракторпа ĕҫлекен трактористсем, вĕсем ҫав срок хушшинчех тата ҫав ĕҫсенчех ĕҫлесе 35 гектартан кая мар ĕҫленĕ пулсан, 35 ĕҫкунĕ чухлĕ преми илеҫҫĕ; кунсăр пуҫне 35 гектартан ирттерсе ĕҫленĕ кашни гектаршăн пĕрер ĕҫкунĕ илеҫҫĕ.

МТС-сенчи «СХТЗ-НАТИ» тракторпа ĕҫлекен трактористсем, вĕсем ҫӳлте асăннă срокрах 90 гектартан кая мар ĕҫленĕ пулсан, 40 ĕҫкунĕ чухлĕ преми илеҫҫĕ; кунсăр пуҫне ҫав срокрах 90 гектартан ирттерсе ĕҫленĕ кашни гектаршăн 0,6 ĕҫкунĕ чухлĕ преми илеҫҫĕ.

МТС-сенчи «ЧТЗ» тракторпа ĕҫлекен трактористсем, вĕсем ҫав срок хушшинчех 120 гектартан кая мар ĕҫленĕ пулсан, 45 ĕҫкунĕ чухлĕ преми илеҫҫĕ тата 120 гектартан ирттерсе ĕҫленĕ кашни гектаршăн 0,5 ĕҫкунĕ хушса илеҫҫĕ.

МТС-сенчи «СХТЗ» маркăллă газогенераторнăй тракторпа ĕҫлекен трактористсем, вĕсем ҫав срок хушшинчех 65 гектартан кая мар ĕҫленĕ пулсан, 40 ĕҫкунĕ чухлĕ преми илеҫҫĕ; кунсăр пуҫне 65 гектартан ирттерсе ĕҫленĕ кашни гектаршăн 0,8 ĕҫкунĕ хушса илеҫҫĕ.

МТС-сенчи «ЧТЗ» маркăллă газогенераторнăй тракторпа ĕҫлекен трактористсем, вĕсем ҫав срок хушшинчех 95 гектартан кая мар сухаланă пулсан, 45 ĕҫкунĕ чухлĕ преми илеҫҫĕ тата ҫав срокра 95 гектартан ирттерсе ĕҫленĕ кашни гектаршăн 0,6 ĕҫкунĕ хушса илеҫҫĕ.

Колхоз ĕҫĕсенче пур хĕрарăм-колхозницăсем те хутшăнса ĕҫлени кирлĕ пулнă май, ҫĕрĕҫ органĕсен ача яслисемпе площадкисене малтанах организацилемелле тăвас пулать, вĕсенче ĕҫлеме ытти йывăртарах ĕҫсенче ĕҫлеймен хĕрарăм-колхозницăсене, ҫавăн пекех тата учительницăсене хутшăнтармалла.

Облаҫсенчи, крайсенчи ҫĕрĕҫ отдел начальникĕсен, республикăсенчи Ҫĕрĕҫ халăх комиссарĕсен ҫуракине хатĕрленмелли мероприятисене районсем пурнăҫа кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, ҫав тĕрĕслевĕн результачĕсем ҫинчен отчетсем илмелле.

Ҫак приказ тăрăхах, СССР Совнаркомĕпе ЦКВКП(б) йышăннă решенипе килĕшсе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана туса хатĕрленĕ, ҫав план тăрăх, выльăх-чĕрлĕх хисепне вăйлăн ӳстерме, выльăх-чĕрлĕхсен пахалăхне лайăхлатма тата вĕсен продуктивноҫне хăпартма палăртса хунă.

Облаҫсенчи, крайсенчи ҫĕрĕҫ отдел начальникĕсен тата республикăсенчи Ҫĕрĕҫ халăх комиссарĕсен ик эрнелĕ срокра 1942 ҫулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тата выльăх апачĕ хатĕрлемелли заданисене районсемпе колхозсем патне ҫитерсе памалла; СССР Совнаркомĕ 1941 ҫулти майăн 29-мĕшĕнче «Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫ валли выльăх апачĕ хатĕрлемелли мерăсем ҫинчен» йышăннă постановленине ҫирĕппĕн пурнăҫа кĕртмелле тăвас пулать.

1942-мĕш ҫулхи ҫуракине большевикла хатĕрленер

Малта пыракан колхозсен примерĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри малта пыракан колхозсем ҫуракине, пĕтĕмĕшпе илсен, хатĕрленсе ҫитрĕҫ темелле. Ҫавăн пек, сăмахран, «Ударник», «Красный Октябрь», Сталин ячĕпе тăракан тата «Динамо», «Красный борец» колхозсем, нимрен малтан, хăйсене кирлĕ вăрлăхсене ҫителĕклĕ хатĕрлерĕҫ, лайăх тасатрĕҫ, сортларĕҫ, халь вĕсене лайăх упраҫҫĕ.

«Красный борец» колхозра, ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе халь тумалли ĕҫсене вĕҫленисĕр пуҫне, ака вăхăтĕнче пĕрле апатланма та хатĕрленеҫҫĕ. Колхоз кĕрпе тутарчĕ, ҫăнăх авăртса хучĕ. «Трактор», «Интернационал» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче лашасене уйрăм ҫитерсе вăйлатма тăрăшаҫҫĕ. «Трактор» колхозра ҫуракинче ĕҫлемелли лашасене кунне 2 килограмм сăкăр, 4 килограмм сĕлĕ ҫитереҫҫĕ тата ăшăрах кунсенче пăтратса параҫҫĕ. «Двигатель революции», «Красный Октябрь» колхозсенче агротехника кружокĕсенче пурĕ 60 ҫын вĕренет. Районри рабочисемпе служащисем 25 ҫын трактор ĕҫне вĕренме тытăнчĕ, рабочисемпе служащисенченех 52 ҫын ялхуҫалăх ĕҫĕсене вĕренет.

В. ВИКТОРОВ.

Ҫуракине хатĕрленмен колхозсем

Шупашкар районĕнче ҫуракине лайăх хатĕрленекен колхозсемпе пĕрлех, паянхи куна ҫитсе ку енĕпе нимĕн те хатĕрленмен колхозсем те пур-ха. Ҫавнашкал колхозсенчен пĕри — Войков ячĕпе тăракан колхоз пулать. Колхозăн пурĕ 17 плуг, 8 сӳре, 15 урапа. Вĕсене юсама тытăнман, ут таврашĕсем те юсавлă мар тата ҫитмеҫҫĕ. Ҫавăн пекех вăрлăхсене те сортламаҫҫĕ.

«Красная Армия» колхозра та плугсемпе сӳресем унта-кунта саланса выртаҫҫĕ — хăшĕсем ҫул ҫинче, хăшĕсем тимĕрҫĕ лаҫҫи умĕнче юр айĕнче лараҫҫĕ. Тимĕрҫĕ лаҫҫи умне вĕсене, паллах, юсама пырса лартнă, анчах паянхи куна ҫитсе вĕсене ҫын алли пырса тĕкĕнмен-ха.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Плугсемпе сӳресем халь те юр айĕнче

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «Красный воин» колхозра ҫуракине пачах та хатĕрленмеҫҫĕ. Колхозăн вăрлăхсем ҫитмеҫҫĕ, пур вăрлăхсене сортлама тытăнман. Тислĕке уя кăлармаҫҫĕ, ăна ҫырма хĕррисене тăккаланă. Плугсемпе сӳресем пĕтĕмпех юр айĕнче лараҫҫĕ, урапасем те ҫавах — юр айĕнех путнă. Ут таврашĕсенчен пĕр ырă япала та ҫук, пĕтĕмпех юсавсăр тата ҫитмеҫҫĕ.

Ҫуракине ҫакнашкал хатĕрленмесĕр тăнине текех чăтма ҫук. Колхоз председателĕн халех ыйăхран вăранмалла, тимлĕн ĕҫе тытăнмалла.

П. МАРТЫНОВ.

Ялхуҫалăх ĕҫне вĕренеҫҫĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуршăл туллимар вăтам шкулĕнче 7-мĕш класра вĕренекенсем ялхуҫалăх ĕҫне вĕренме тытăнчĕҫ. Ялхуҫалăх ĕҫне вĕренес тĕлĕшпе пурĕ 12 занятисем туса ирттернĕ. Пионерсемпе шкул ачисем ҫĕнĕ предмета юратаҫҫĕ. Ҫуркунне вĕсем колхоз уйхирĕсенче ĕҫлеме хатĕрленеҫҫĕ.

Н. МИХАЙЛОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 12-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисем хирĕç тăнине сирсе пырса, малалла куçнă тата фронтăн хăшпĕр участокĕсенче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Противник техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсет.

Мартăн 11-мĕшĕнче нимĕçсен 8 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 4 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 11-мĕшĕнче пирĕн авиаци пĕр чаçĕ нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 ытла автомашинине, боеприпассем тиенĕ темиçе вуншар лавĕсене, полевой орудине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, чугун çул çинчи 6 вагона çĕмĕрнĕ, противник пехотин икĕ взводне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн пĕр часть (Хĕвеланăç фрончĕ) 5 кун хушши çапăçса нимĕçсенне 10 танк, 26 оруди, 10 станковăй тата 3 ручной пулемет, пысăк калибрлă 3 пулемет, 1 миномет, 18 пин патрон, 11 ешĕк граната тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Çапăçу хирне противник çĕршер виле пăрахса хăварнă.

* * *

Пирĕн войскăсем йышăнса илнĕ пунктсенчен пĕринче (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) çĕнĕрен тунă виле шăтăкĕсем 80 шăтăк тупнă. Кашни шăтăкрах нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 30—40-шер çынна пытарнă. Фронтăн çак участокĕнче кĕрешекен пирĕн чаçсем наступление малалла вăйлатса пыраççĕ. Совет летчикĕсем пĕрмаях тăшман пехотине штурмлаççĕ тата противникăн самолечĕсене хирĕç сывлăшра çапăçаççĕ. Çак участокра пирĕн авиаци пĕр кун хушшинче кăна тăшманăн 9 самолетне персе антарнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем Г. пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем, çапăçу хирне хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 150 виллине пăрахса хăварса, каялла чакнă. Тытса илнĕ трофейĕсем хушшинче: 1 танк, 6 оруди, 22 пулемет, 150 винтовка, 4 миномет, 100 ешĕк мина тата танксене хирĕç печелли 7 пăшал.

* * *

Пирĕн çуран разведка взвочĕн политрукĕ Горбатов юлташ пирĕн пехотăна малалла куçма тăшманăн пулемечĕ чăрмантарнине асăрханă та, пулемет патне систермесĕр йăпшăнса пырса, нимĕç пулеметчикĕсене пĕтерсе тăкнă. Горбатов юлташ хăй тытса илнĕ пулеметран тăшман çине пеме тытăннă. Нимĕçсем 10 салтак çухатса хăварса каялла чакнă. Пирĕн пехотăна малалла куçма çул уçăлнă.

* * *

Курск облаçĕнче кĕрешекен партизансен И. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсем хăйсен танкĕсене фронт патнелле илсе пыракан çул çинчи кĕпере взрыв туса сирпĕнтерсе янă. Гитлеровецсем танксене пĕр çинĕ кăçарма хăтланнă, анчах ту пĕр çĕмĕрĕлсе аннă та икĕ танкĕ шыва путнă, çавăнпа вĕсем кĕпере хăвăрт юсама тытăннă. Тепĕр виçĕ кунран нимĕçсем юсанă кĕпере партизансем каллех çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Аялерахра румынсен пĕрремĕш пехотнăй дивизийĕнчи 85-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчи фельдфебелĕн Росс ятлă нимĕçĕн дневникĕнчен хăшпĕр вырăнсене кĕскен илсе кăтартатпăр:

«**1942 çулти январĕн 26-мĕш.** Йĕри-тавра пур çĕрте те партизансем нумай тесе калаççĕ. Нумаях та пулмасть, кунта виçĕ итальянеца вĕлернĕ.

Февралĕн 3-мĕш. Каçхине пирĕн ротăна каялла сирсе ывăтни çинчен пĕлтĕмĕр. Старши лейтенант тата унăн 2 отделенийĕ вырăссем патне тытăнса лекнĕ. Ĕç эпĕ кĕтнинчен пачах урăхла пулса тухрĕ.

Февралĕн 4-мĕш. Вырăссем йышăнса илнĕ ял çине эпир икĕ хут тапăнтăмăр. Икĕ хутĕнче те пысăк çухатусем тӳссе каялла чакмалла пулчĕ. Тăшман пирĕн çине мулкача çине пенĕ пекех печĕ. Пирĕн вилнисем тата аманнисем питĕ нумай. Манăн старши лейтенант аманнă. Пур енчен те йышăнни тата макăрни илтĕнет. Çынсем йĕркерен тухса кайрĕç.

Февралĕн 6-мĕш. Манăн взводра 44 çынран 28 çын анчах юлчĕ. Каçхине 6 сехетре приказ килчĕ: ыран генеральнăй наступлени пуçланать.

Февралĕн 7-мĕш. 13 сехетре наступлени пуçланчĕ. Тăшман вăйлăн пеме тытăнчĕ. Пирĕн хушăра тӳрех аманнисем курăнма пуçларĕç. Вăхăтран вăхăта такам кăшкăрни илтĕнет. Пĕр офицер çынсене малалла хăвалама хăтланчĕ, анчах та ахалех пулчĕ. Пурне те паника çавăрса илчĕ. Пире текех нимĕн те тытса чарма пултараймарĕ. Пурте каялла тартăмăр.

Февралĕн 8-мĕш. Енерхи куна пурте астăватпăр. Манăн взводра вилнисем 2 çын, аманнисем 8 çын, 5 çынна тăм илнĕ, 4 çын тарса çӳреççĕ, икĕ салтак тарнă».

* * *

Гитлер çарĕ валли Францире пухнă «добровольцсене» пурте кураймаççĕ тата вĕсенчен кулаççĕ. Вĕсенчен нимĕç обывателĕсем те мăшкăллаççĕ. Нимĕç салтакĕ Гейнц Бергер патне çырнă çырура çапла каланă: «Кашни эрнерех кăтартакан кинора Хĕвел-тухăç фронтне каякан французсене кăтартрĕç. Çавтери кулăшла картина. Пĕр енчен, тыткăна лекнĕ французсем тар юхтарсах пирĕншĕн пĕр тӳлевсĕр ĕçлеççĕ. Тепĕр енчен, французсем нимĕç салтакĕсен тумтирне тăхăннă. Çакна ăнланса илме манăн пуçра ăс çитмест».

Мартăн 13-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн чылай участокĕсенче совет войскисем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн стрелковăй батальон, каçхине пулса иртнĕ вăйлă çапăçу хыççăн, противникăн хирĕç тăмалли вырăнне йышăнса илнĕ. Нимĕçсем, çапăçу хирне çĕршер виле пăрахса хăварса, каялла чакнă. Тепĕр участокра пирĕн стрелковăй часть противник малтан çухатнă позицисене таврăма хăтланса тунă темиçе контратакăна сирсе пăрахнă. Çапăçу хирне противник хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 200 ытла виллине пăрахса хăварнă, пирĕн боецсем хирĕç тăрассине çĕмĕрме хăтланассине нимĕçсен ирĕксĕрех пăрахмалла пулнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.120 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн артиллери вăйлăн персе нимĕçсен çĕрпе йывăçран тунă 7 огневой точкине, 12 блиндажĕпе землянкине çĕмĕрнĕ, пулеметсен 4 йăвине тата боеприпассемпе продовольстви турттарса пыракан темиçе автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн боецсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 420 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 38 лавран тăракан обозне çавса аркатнă тата хĕçпăшалсемпе хирти почтăна тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕçĕн лейтенант Бамбуль винтовкăран персе нимĕçсен самолетне ӳкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 55-мĕш пехотнăй полкăн 13-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ фельдфебель Фридрих Энтер çапла каласа панă: «Пирĕн ротăн материальнăй чаçĕ юлашки вăхăтра пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтрĕ. 75 миллиметрлă 6 тупăран тата 150 миллиметрлă 2 тупăран халĕ 75 миллиметрлă пĕр тупă тата 150 миллиметрлă пĕр тупă кăна юлчĕ. Юлашки туписем те çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ тата эпир каялла чакнă чухне чылайĕшне пăрахса хăварнă. Çынсем енĕпе те çухатусем питĕ пысăк. Пирĕн ротăра 180 çынран 40 çын анчах юлчĕ. Ытти ротăсенче те çухатусем пысăк. Вăрçăн юлашки уйăхĕсем вырăссен çарĕ çинчен пулнă пирĕн малтанхи шухăшсене тĕпренех улăштарчĕç. Халĕ ĕнтĕ офицерсем те Гитлер часах çĕнтерӳ пуласси çинчен каланине аса илме хăраççĕ».

* * *

Финсен çарĕнчен тыткăна лекнĕ капрал Матти Август Рюхянен çапла каласа панă: «Нумай пулмасть пирĕн паека татах чакарчĕç. Çакна хирĕçлесе, пирĕн взвод занятине тухмарĕ. Ĕç мĕнле пĕтнине эпĕ пĕлместĕп, мĕншĕн тесен эпĕ часах тыткăна лекрĕм».

* * *

Нимĕçсен 4-мĕш танковăй дивизийĕнчи 103-мĕш артиллери полкĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Хейно Эндельман çапла каласа панă: «Эпир, нимĕçсен 16 салтакĕ, К. ялне продуктсем тупас тесе тухса кайрăмăр. Яла пынă чух пирĕн çине пулеметсемпе винтовкăсенчен пеме тытăнчĕç. Эпĕ юр ăшне ӳкрĕм, унтан пуçа çĕклесе пăхрăм та пирĕн 14 салтак вилсе выртнине куртăм. Эпĕ тата манăн юлташ Резнер хирĕç тăмасăрах тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Карпат Русĕнчи партизансем Венгри пусмăрçисене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçаççĕ. З. местечко патĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки уйăх хушшинче продовольстви-сем турттарса пыракан транспортсем çине 5 хут пырса тапăннă, хĕçпăшалсен икĕ складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи горючи тултарнă 9 цистернăна çунтарса янă, 17 грузовой автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансен тепĕр отрячĕ чугунçул тăрăх Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронталла каякан горючи тултарнă цистернăсен эшелонне сирпĕнтерсе янă. Б. местечки патĕнче партизансен отрячĕ каçхине венгерсен танковăй колонни çине пырса тапăннă та, çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем ывăтса, 11 танка вут тивертсе янă. Çапăçу икĕ сехет хушши ытла пынă. Çак çапăçура венгерсен салтакĕсемпе офицерĕсем 60 çын ытла вилсе пĕтнĕ. Партизансем аэродром çине пырса тапăнса венгерсен 3 самолетне пĕтерсе тăкнă. Чугунçул çинчи пĕр вокзалта çар пурлăхĕсен складне çунтарса янă. С. ятлă вырăн çывăхĕнче партизансем венгерсен продовольстви транспортне тытса илнĕ те продуктсене выçăпа аптăранă вырăнти халăха салатса панă.

* * *

Лаутри алюмини заводĕнче (Германия) ютçĕршывсенчи рабочисен пăлханăвĕсем пулса иртнĕ. Рабочисем завода чарса лартнă та пысăк машинăсенчен чылайĕшне юрăхсăра кăларнă. Гитлеровецсем забастовкăна хĕçпăшалпа пусарса лартнă. Гестаповецсем пĕтĕм поляксене, итальянецсене тата французсене сăнчăрланă. Ютçĕршывсенчи рабочисене нормăна тултарманшăн халăх умĕнче хĕнеççĕ.

5700 вĕçев

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. Аэродром çинче пурте хальченхи пекех пулнă: летчиксен составĕ боевой задानисем илнĕ, техниксемпе мотористсем машинăна вĕçеве хатĕрленĕ. Çак вăхăтра вĕсен полкне гвардейски полк туни çинчен калакан савăнăçлă хыпар çитнĕ. Сигнал тăрăх пĕтĕм личнăй состава 1 йĕркене тăратса тухнă. Митинга Мускав военнăй округĕн сывлăш-çар вăйĕсен командующийĕ генерал-майор Сбытов тата бригаднăй комиссар Чернышев юлташсем пырса çитнĕ. Полк командирĕнчен рапорт йышăнни хыççăн Сбытов юлташ митинга пухăннисем енне çавăрăнса çапла каланă:

— Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн приказĕ тăрăх, сирĕн 120-мĕш истребительнăй авиационнăй полка 12-мĕш гвардейски истребительнăй авиационнăй полк тунă. Эсир гвардеецсен ятне столицăна нимĕç вăрçă-хураххисенчен отличнă сыхланăшăн илтĕр. Сирĕн полк пĕтĕмпе вăрçăра 5700 вĕçев тунă, вĕсенчен 1293 вĕçевĕ штурмовой вĕçевсем. Эсир, гвардеец-летчиксем, тăшманăн 142 танк, 1558 автомашина, 42 оруди, зенитнăй пулеметсен 83 точкине, 11 самолет, çавăн чухлех бронемашинăсем, тăшман пехотин 6 полкне тата ыттине те пĕтерсе тăкнă. Округ командованийĕ эсир гвардеецăн хисеплĕ ятне çӳлте тытасса шанса тăрать.

Сбытов юлташ хăй сăмахне сталинла сокол-гвардеецсене, Хĕрлĕ Çара, Сталин юлташа сывлăх сунлине вĕçлет. Ăна ответлесе харăссăн кăшкăрнă «урра» янăраса тăрать.

Летчиксен составĕ ячĕпе сывлăшри çапăçусенче фашистсен 8 самолетне персе ӳкернĕ боевой летчик, лейтенант Рубцов тухса калать. Хăйĕн сăмахĕнче вăл: «гвардеецсен хисеплĕ ятне тӳрре кăларатпăр. Хамăран командованине, партие, правительствăна тата Хĕрлĕ Çарăн çулпуçне—Сталин юлташа: малашне эпир тăшмана виçĕ хут ӳстер нĕ вăйпа çапса салататпăр, тесе шантаратпăр».

Полк калама çук чаплă çынсем пăхса çитĕнтерчĕ: вĕсем хушшинче Бабенко, Даманин капитансем, Александров, Кохан старши лейтенантсем, Михайлов, Гауте, Штучкин, Шпак тата Бочкарев лейтенантсем. Вĕсем кашниех 40-шер штурмовой вĕçев тунă.

А. УСТИНОВ.
(«Правда», мартăн 10-мĕш).

Потакевич красноармеец винтовкăпа персе тăшман самолетне ӳкернĕ

КАНТĂР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, (ТАСС спецкорĕ). Пĕр ял тĕлне сасартăк «Мессершмитт-109» вĕçсе пынă. Вăл питĕ аялтан вĕçсе çӳресе пулеметран пенĕ. Çывăхрах пирĕн авиаци те, зенитчиксем те пулман пирки сывлăшри вăрă-хурах нимĕн те шикленмен.

Çав яла ăнсăртран пырса кĕнĕ красноармеец Алексей Потакевич ишĕлнĕ сарай айне пытаннă та нимĕçсен сывлăшри бандитне сăнаса тăнă. Фашистсен самолечĕ тата аялара анса виççĕмĕш хут çавăрăнсан, Потакевич ăна самозарядный винтовкăран пеме пуçланă. Вăл 50 пуля персе кăларса янă. Анчах самолета сиен кӳреймен. Потакевич 6-мĕш магазина лартнă та тĕллĕнрех тĕллесе пенĕ. Темиçе хутчен персе вăл самолет моторне тивертнĕ. Тăшман самолечĕ çĕре чул пек ӳксе саланса кайнă.

Л. РОЗОВ.

Гитлерла Германин шалти йывăрлăхĕсем

СТОКГОЛЬМ, мартăн 10-мĕш. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсем çивĕчленсе пыни Германире пур çĕрте те сисĕнет. «Хĕл, — çырать корреспондент, — нимĕçсене пысăк çухатусем кӳчĕ. Йывăрлăхсем фронтра кăна мар, тылра та сисĕнеççĕ. Транспорт тĕлĕшĕнчен йывăрлăхсем пулнипе чи малтанах топливо çитми пулчĕ. Хуласенче чылай хваттерсенче пĕр пӳлĕмре çеç пурăнаççĕ, мĕншĕн тесен ытти пӳлĕмсене хутма вăй çитерейменççĕ. Çĕркăмрăкне перекетлес тесе, театрсене те темиçе кунлăха хупа-хупа лартаççĕ. Топливо суккине пула промышленноçăн пысăк предприятийĕсене те хупаççĕ. Берлин урамĕсем çар çыннисемпе тулнă. Тĕрлĕ хуçалăхпа çар учрежденийĕсенче ĕçлекен чиновниксене, вĕсене ĕлĕк ниепле те хăйсен ĕçĕнчен уйăрма май çук пулнă пулсан, халĕ çара илнĕ. Ку кăна мар, ютçĕршывсенче пурăнакан нимĕçсемпе дипломатсене те çара чĕнтереççĕ. Германи оркестрĕсен йышĕ сайралса юлчĕ. Берлин хулин оркестрĕнчен квалификациллĕ 27 музыканта çара илнĕ. Çав хушăрах тата Германи фронтĕнчен нимĕçсен çарĕн çухатăвĕсем ӳссех пыраççĕ тесе пĕлтереççĕ. Фронт çывăхĕнчи лазаретсем, Германири, Словакири, Балканри çĕршывсенчи больницăсем суранланнă тата аманнă çынсемпе тулса ларнă. Вилнисем çинчен çырса пĕлтернисем нимĕç хаçачĕсенче ӳснĕçемĕн ӳссе пыраççĕ. СС хаçачĕ — «Шварце Корпс» хăйĕн советсемпе Германи хушшинче пыракан вăрçă фронтĕнче вилнĕ СС салтакĕсем çинчен çырса пĕлтермелли вырăнне темиçе хут пысăклатрĕ.

«Фронта çырусем те, посылкăсем те яма чарни çинчен» кăларнă распоряженинине паян куна çити те пăрахăçламан.

Венгри хуçалăхĕнчи пысăк йывăрлăхсем

СТАМБУЛ, мартăн 12-мĕш. (ТАСС). Венгри хуçалăхĕ, гитлерла Германин интересĕсемшĕн ĕçлекенскер, питĕ те пысăк йывăрлăхсем тӳссе ирттерет. «Петтер Ллойд» хаçат нумай пулмасть çакна кăтартса панăччĕ. Венгри хуçалăхĕ уйрăманах чĕртавар çитменни пирки тата 1941 çулта тырă ăнса пулман пирки йывăрлăх тӳсет; çакна пула вара предприятисем е хăйсен производствине чакарнă, е йăлтах хупăнса ларнă.

Юлашки çулта Венгрин тулашри суту-илĕвĕ те нумай улшăннă. Болгарире тухакан «Заря» хаçат, официальнăй даннăйсем çине кăтартса, çапла пĕлтернĕччĕ: Венгрин Европа тулашĕнчи çĕршывсемпе туса пыракан суту-илĕвĕ 1941 çулта ютçĕршывсемпе тăвакан суту-илĕвĕн пĕтĕм çаврăнăшĕн 0,4 процентне таран чакнă. Венгрин ялхуçалăхĕпе промышленноçĕн пĕтĕм продукцине тенĕ пекех Германие ăсатаççĕ. Юлашки вăхăтра Италие илсе каякан продукци те чакнă. Анчах та Венгрирен Германие тавар илсе каясси Германирен Венгрие тавар илсе пырасси ӳсние пĕртте пĕлтермест. Германирен Венгрие тавар илсе пыраcси иртнĕ çулхи хисепĕн 20 процентне çеç çитсе пырать. Çав вăхăтрах Венгрирен илсе тухакан мĕнпур таварсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ ытла Германие каять.

Венгрин ялхуçалăхĕ тӳссе ирттерекен йывăрлăхсем çине кăтартса, «Петтер Ллойд» хаçат çапла çырать: «Ялхуçалăхĕнче ĕçленĕ нумай рабочисем хуласене тата çара кайнипе ялта ĕç вăйĕ çитменни ялхуçалăх машинисен шутне ӳстерме хушать. Пĕлтĕр çав машинăсен пĕр пайне Германирен илсе пыначчĕ. Халĕ ĕнтĕ машинăсене ютçĕршывсенчен илсе килесси çинне шанма çук».

Апла пулин те Германия Венгрин ялхуçалăхне ытларах та ытларах интенсификацилеме хушать. «Дейче альгемейне цейтунг» хаçат каланă тăрăх, Германие кирлĕ соя, çу культурисем тата техникăллă ытти культурăсем акассине ӳстерме палăртса хунă. Венгрин ялхуçалăхĕнче ирĕксĕрле ĕçлеттерес йĕркене пурнăça кĕртнĕ.

Германия Венгри рынокне çаратни продовольстви йывăрлăхĕсене калама çук хăрушшăн ӳстерсе ярать. Пĕр январь уйăхĕнче кăна çăкăр паекне икĕ хутчен чакарнă, кашни çын пуçне 200 грамм çеç памалла тунă.

1942 çулти вăрçă бюджечĕ, 4.500 миллион пенгона çитекенскер, халăха питĕ йывăра килет. Правительство ĕнтĕ хаксене татах тепĕр хут хăпартнă, налогсене тата шалти заемсене ӳстернĕ, тесе палăртать хаçат.

Венгри правительстви отставкăна тухни

ЖЕНЕВА, мартăн 11-мĕш. (ТАСС). Венгрири радио Венгрин премьер-министрĕ Бардоши отставкăна тухни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Çавăн пекех Бардоши правительствин пур членĕсем те отставкăна тухнă. Берлинпа Будапештра официальнăй учрежденисем Бардоши отставкăна «чирленĕ пирки» тухнă тесе ăнлантарса параççĕ, чирленĕ пирки «ăна паллă мар вăхăтлăха санаторие вырнаçтармалла пулнă», теççĕ.

Венгри регенчĕ Хорти премьер-министр пулма Миклоша Каллая уйăрса лартнă. Вăхăтлăха ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ вырăнне те вăлах пулмалла. Отставкăна тухнă правительствăн членĕсене Хорти пурне те каллех ĕлĕкхи вырăнсенчех хăварнă.

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕш. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Венгрин премьер-министрĕ Бардоши отставкăна тухни çакна кăтартса парать: Германия Венгрирен çуркунне çитичченех 500.000 çын таран çĕнĕ войскăсем тăратма ыйтни Германипе Венгри хушшинче хирĕçӳсем кăларса янă. Венгри правительстви Германи ыйтнине çуррине кăна пама килĕшнĕ, мĕншĕн тесен Венгрин ялхуçалăхне ĕç вăйĕ нумай кирлĕ пирки 500.000 çын çара мобилизацилеме май килес çук, тенĕ. Германи генералĕ Кейтель нумаях пулмасть Будапештра пулнă чухне Венгрия Венгрире пурăнакан нимĕçсене Венгри подданствинчен хăтарса «СС» войскисем валли 20.000 çын мобилизацилеме килĕшнĕ.

Каланă тăрăх, Германипе Венгри хушшинчи хирĕçӳсем Венгрире пурăнакан нимĕçсем пирки тухса кайнă. Кунти нимĕçсен представителĕсем хăйсене хăйсем ытла та чăрсăррăн тытаççĕ. Агентство даннăйĕсем тăрăх, Венгрире миллион çурă нимĕç пурăнать, анчах та Германире унтан нумайрах тесе шутлаççĕ.

Çакăн пек сведенисем пур: Бардоши Германи представителĕсемпе калаçнă чухне Венгрин никама пăхăнманлăхне ятшăн кăна пулин те хăварма ыйтнă, анчах вăл çапла хăтланни ахалех пулнă.

Нельсон Америкăра çар матерталĕсен производствине вăйлатма чĕннĕ

ВАШИНГТОН, мартăн 12-мĕш. (ТАСС). Çар материалĕсен производстви тĕлĕшпе ĕçлекен управленин руководителĕ Нельсон радиопа тухса каланă, вăл Америка халăхĕ çар материалĕсен производствине вăйлатса яма хушать, тенĕ. Çакăнпа пĕрлех Нельсон вăрçă хатĕрĕсем кăларас ĕçе татах та ытларах сарса пыма чĕннĕ.

«Вăрçă производстви валли уйăрнă пĕтĕм оборудованисем пĕр чарăнмасăр ĕçлесе тăрсан,—тенĕ вăл,—эпир вăрçă хатĕрĕсем кăларакан производствăри ĕç хисепне тата икĕ хут ытла ӳстерме пултаттăмăр. Хальхи вăхăтра пирĕн вăрçă хатĕрĕсем туса кăларакан предприятисен пилĕк пайĕнчен пĕр пайĕ эрнере пилĕк е тилĕк кун çуршар çеç ĕçлесе тăрать. Хăшпĕр предприятисенчи иккĕмĕш сменăра ĕçлекенсем çар предприятисен производствин пултарулăхĕн пилĕк пайĕнчен икĕ пайĕпе çеç усă кураççĕ. Самолетсем, авиаци валли моторсем, тимсем тăвакан предприятисем пурте çак промышленноçра хальхи вăхăтра туллин ĕçлесе тăракан чи лайăх виçĕ предприяти пек ĕçлеме тытăнсан, эпир çав предприятисем продукци кăларса тăрассине халăх 25 процентран кая мар ӳстерме пултаттăмăр. Станоксем туса кăларакан промышленноçри 153 предприяти пурте çак промышленноçри чи лайăх ĕçлекен виçĕ предприяти пек ĕçлеме тытăнсан, машинăсем туса кăларас продукцине эпир халех 45 процент таран ӳстерме пултарăттăмăр».

Малалла Нельсон çар ĕçĕсемпе тивĕç ĕçĕсен министерствисен материалсем илсе хатĕрлекен отделĕсене тата правительство çумĕнчи тивĕç ĕçĕсен комиссине пĕр организаци пĕрлештерме кирли çинчен, вĕсем вырăнне çар хатĕрĕсен производствин управленийĕпе пĕрле ĕçлесе тăракан пĕр снабжени системи тумалли çинчен каланă. Ĕçе çакăн пек туни вăрçă хатĕрĕсен продукцине кăларса тăрассине ӳстерме май памалла, тенĕ Нельсон. Нельсон профсоюзсене тата предприяти хуçисене пурне те хĕçпăшал производствин тĕлĕшпе киллĕштерсе ĕçлеме чĕннĕ. «Пĕр-пĕрнипе килĕшӳллĕн ĕçлеме кăмăл тумасан, кунта пĕр çул çеç юлать—производствăна кирлĕ таранах вăйлатас тесе ирĕксĕр ĕçлеттермелле пулать», тенĕ Нельсон.

Англире учительсем валли ССР Союзĕпе паллашмалли семинарсем тăваççĕ

ЛОНДОН, мартăн 12-мĕш. (ТАСС). Англин çутĕç министрĕ Баттлер Англире учительсем валли Совет Союзĕпе паллашмалли семинарсем организацилесси çинчен пĕлтернĕ. Семинарсем мартăн 13-мĕшĕнчен пуçласа 16-мĕшĕчен пулса иртмелле. Вăл семинарсене Лондонри тата Лондонпа юнашар графствăсенчи тĕрлĕ типлĕ шкулсенче вĕрентекен учительсене пурне те хутшăнтармалла. Ку семинарсем Англири учительсене Совет Союзĕн пурнăçне, унăн культурин çитĕнĕвĕсене тĕплĕнрех пĕлсе тăма пулăшмалла.

Англи авиацийĕ Рур облаçĕ çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, мартăн 11-мĕш. (ТАСС). Официально çапла пĕлтернĕ: Англии бомбардировщикĕсем каллех Рур облаçĕнчи тĕрлĕ объектсене атакăланă. Промышленноçлă районсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Риомри процесс

ЖЕНЕВА, мартăн 11-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Риомри судăн 10-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Суд Леон Блюма допрос тунă. Виши правительствин официальнăй агентстви Гавас-ОФИ çав лару çинчен кĕскен пĕлтернĕ тăрăх, Леон Блюма судра вăл ĕç эрнине кĕскетесси çинчен, тӳлевлĕ отпусксем çинчен тата коллективлă договорсем çинчен калакан закона пурнăçа кĕртнĕшĕн айăпланă; халăх фрончĕн программин пĕр пайĕ пулса тăракан çак законсем вара Франция вăрçă тĕлĕшĕнчен вăйсăр пулнин сăлтавĕ пулса тăнă иккен. Цифрăсемпе, фактсемпе усă курса, Блюм хăйне çавăн пек айăплани тĕрĕс маррине кăтартнă. Блюм çапла каланă: ĕç эрнине кĕскетнĕ пулин те, çар предприятийĕсенче продукци ӳснĕ, мĕншĕн тесен çĕнĕ законсем кăларни рабочисен ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшнă, тенĕ. Суд председателĕ продукци пĕтĕмĕшпе ипсен чакнă, тесе каланине хирĕç Блюм, официальнăй статистика çине кăтартса, çапла каланă: ку вăл промышленниксем производствăна ӳстерессине саботаж туса пынипе тата промышленноçăн оборудованийĕпе çителĕклĕн усă курманнипе пулнă, тенĕ. Ĕç эрнине кĕскетесси çинчен тата тӳлевлĕ отпусксем çинчен закон кăларса, правительство хăйĕн тĕп задачине — ĕçсĕрлĕхе чакарассине пурнăçласшăн пулнă; промышленниксем çавăн пек методсемпе ĕçлесе çак тĕп задачăна пурнăçлассине кансĕрлеме хăтланнă. Промышленниксем саботаж тунă пирки, пĕтĕмпех ĕçсĕррисемпе хăшпĕр таран ĕçсĕррисен шучĕ чакман, çакна пула вара пĕтĕм продукцин хисепĕ те ӳсмен, тенĕ.

Блюм хăй пысăк сăмах каласшăн пулни çинчен пĕлтернине кура, председатель ларăва вăхăтлăха хупнă.

Леон Блюм тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 12-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Риомри судăн ĕнерхи ларăвĕнче Блюм — вăрçă тухнăшăн тĕнĕл держависем айăплă, мĕншĕн тесен вĕсем 1936 çулта хĕçпăшалсăрланасшăн пулмарĕç, тесе каланă. Блюм сăмахĕ тăрăх, вăл ĕлĕк пацифист пулнă, анчах кайран, Францин никама пăхăнманлăхне агресси хăратма тытăнсан, вăл Францине хĕçпăшаллантарма кирлине ăнланса илнĕ. Хăйĕнчен ыйтнине хирĕç ответлесе, Блюм çапла каланă: эпĕ тăрăшни мĕнпурĕ те çар промышленноçне национализацилессишĕн тăнинче кăна пулнă, тенĕ.

Риомри процесса Блюм хăшпĕр политикăллă ушкăнсен представителĕсене хирĕç тунă политикăллă процесс тесе хаклать.

Юнайтед пресс агентствин Риомри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Блюм çапла каланă: Германия çине тăрсах хĕçпăшалланнă вăхăтра Франция çар служби срокне ӳстерессшĕн пулмарĕ, мĕншĕн тесен сенатăн çар комиссийĕнче пĕтĕм çав мероприятине халăх ырлас çук, тесе тухса каларĕç. Çав çулах Лаваль çар ассигнованийĕсене ӳстерме май çук тесе пĕлтерчĕ.

Судăн ĕнерхи ларăвĕнче Блюм виçĕ сехет ытла калаçнă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Францин республикăллă йĕркине хӳтĕленĕ. Сăмах май вăл хăйĕн правительстви, коммунистсен парти членĕсен сарлака массисене шута илсе, коммунистсен пулăшăвне йышăннă, тесе каланă. «Республика идейисене халăхăн сарлака массисенчен уйăрăлса кайнипе хӳтĕлеме çук», тенĕ Блюм.

Блюм тата çапла каланă: «Паян Росси эпир икĕ çул ĕлĕкрех çапăçнă тăшмана хирĕç кĕрешет, заложниксен йышĕ те пуринчен ытла коммунистсен партин членĕсенчен тăрать, туртса илнĕ зонăсенче вĕсене ĕнтĕ пере-пере пăрахаççĕ. Хаçатсем нумай пулмасть кăна пĕр коммунистăн, мана хирĕç вăйлăн кĕрешнĕ коммунистăн, хушаматне асăнчĕç. Ăна вĕлернĕ, анчах та вăл герой вилĕмĕпе, хăйне халăх фрончĕ юрлама вĕрентнĕ «Марсельезăна» юрласа вилнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КИНО-ТЕАТР
14 и 15 МАРТА
КОНЦЕРТЫ
В АНТРАКТАХ И ПО ОКОНЧАНИИ
ТАНЦЫ
Играет духовой оркестр.
Начало в 23 часа.
Касса с 14 часов в кино-театре.

Чебоксарскому кож-комбинату им. Водопьянова
требуются на постоянную работу:
обувщики,
кожевники и ученики.
Обращаться в отдел кадров комбината, ул. Ворошилова, 27.
2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 674 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 256. [illegible]